**Фермăсем хĕл умĕн**

# Выльăх-чĕрлĕх самăр та илемлĕ



**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Чкалов яч. хис. хуçалăхра паянхи куна măйракаллă шултра выльăхсем 163 пуç. Вĕсенчен 53-шĕ сумалли ĕнесем. Шăпах вĕсене йышлатасшăн та ĕнтĕ хуçалăх ертӳçи. Çамрăк выльăхсене тăрантарнă çĕрте Исетерккĕсем экструдированнăй апатпа усă кураççĕ. Технологие пăхăнса ĕçленĕрен самăртма хупнă măйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ иртнĕ 8 уйăхра вăтамран 700 грамм пулнă. Тислĕкрен тасатнă, дезинфекциленĕ ферма çурчĕсем çитес хĕле хатĕр. Хĕл каçма янтăланă 290 тонна утă пахалăхĕпе пĕтĕмпех 1-мĕш класлă.

**«Ударник».** Çак сăнавлă производство хуçалăхĕнче хĕл умĕнхи ĕçсемпе пире хуçалăхăн тĕп ветврачĕ Л. Платонова тата Ю. Тимофеева зоотехник-селекционер паллаштарчĕç. Пĕтĕмлетсе каласан, хуçалăх хĕле хатĕр. Хуçалăх фермисенче паян 1268 пуç măйракаллă шултра выльăх (вĕсенчен 510-шĕ – сумалли ĕнесем), 621 пуç сысна, 25 лаша. Çак выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хуçалăх 1050 тонна (мĕн кирлин 82 проценчĕ) утă, 2980 тонна сенаж, 810 тонна (мĕн кирлин 60 проценчĕ) силос янтăланă. Çулталăк пуçланнăранпа 8 уйăхра 1501,2 тонна сĕт суса илнĕ, халăхран 154, 7 тонна пуçтарнă. Ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм – 2943 килограмм. Хĕле хатĕрленсе пур фермăсенчен те тислĕке хире кăларнă. «Ударниксем» те выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче технологие пĕрремĕш вырăна хураççĕ.

Çак кун эпир çитсе курнă пур фермăра та – Матьăкри сĕт ферми, Вăрманкассинчи сĕт ферми, Вăрманкассинчи сысна ферми, Панклири сĕт ферми, Хурăнкассинчи кĕтĕве çĕнетмелли тынасене тĕллевлĕ ӳстермелли ферма, çуллахи лагерь, Йӳçкассинчи сĕт ферми – çак куна юсав ĕçĕсене пурнăçланăччĕ, сарайсене шуратса дезинфекциленĕ. Утă-улăм хĕл кунĕсем валли турттарса хунă. Кунпа пĕрлех выльăхсене хĕллехи рацион çине куçарма пуçланă. Çакнашкал лару-тăрура ĕнесем талăксерен вăтамран 12-13 килограмм сĕт антарнинчен тĕлĕнме кирлех-ши? Паллах çук.

Юсав ĕçĕсене туллин пурнăçланă пулсан та, Вăрманкасси уйрăмĕнчи сĕт ферминче кулленхи юсав ĕçĕсем пирки те манмаççĕ. Çапла вара çывăх вăхăтрах ĕне сарайĕнчи йывăç урайсене тĕллĕн-тĕллĕн юсаса çĕнетме шутлаççĕ. Ĕнесем усăлса çӳремелли картара улăм çителĕклĕ. Ĕнесен рационĕнче 5 кг концентрат, 4 кг утă, 5-7 кг çĕр улми, 20 кг симĕс масса. 140 пуç ĕнене сума икĕ сменăпа виçшер доярка ĕçлет. Ытти ĕçсенче вăй хуракансем те смена йĕркине пăхăнса ĕçлесе пыраççĕ. Çак уйрăмăн М. Степанов ертсе пыракан сысна ферминче те технологие пăхăнасси малти вырăнта. Кунта сыснасене тăрантарма биовитаминлă минераллă хутăшсемпе усă курнăран сысна çурисем ӳстерекен уйрăмра 8 уйăхри вăтам ӳт хушаслăх 502 грампа танлашать, самăртнă çĕрте – 469 грампа.



**Фермăсенче утă-улăм çителĕклипех. Ку савăнтарать.**

Çак икĕ хуçалăхра та паянхи куна выльăхсем, тĕпрен илсен, таса, самăр та илемлĕ. Вĕсен продуктивлăхĕ те начар мар. Ăна хĕл кунĕсенче те тивĕçлĕ шайра сыхласа хăварасси пĕрлехи тĕллев пултăрччĕ.

Фермăсене хĕле хатĕрленине тĕрĕслес ĕç районта малалла пырать.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Вăрманкассинчи сĕт ферминче 12 çул дояркăра ĕçлекен Валентина Филипповна Алексеева фермăри нихăш ĕçрен те пăрăнса тăмасть.**



**40 çул «Ударник» хуçалăхра тракторпа ĕçленĕ Николай Гаврилович Гаврилов паян Матьăкри сĕт ферминчи слесарь-юсавçă.**



**Лидия Ивановна Васильева Вăрманкассинчи сĕт фермине ертсе пынипе пĕрлех хăех доярка та. Иртнĕ 8 уйăхра пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм унăн чи пысăкки.**

**«Сывлăх» наци проекчĕ**

# Çынсем паян та унран канаш ыйтаççĕ

Тĕрлĕрен пулать тĕл пулу, анчах вĕсенчен кашниех чĕрере ырă йĕр хăварать, çĕнĕ туйăмсем çуратать, пурнăç илемне туйма вĕрентет...

Аслăрах ăрури кашни çын майлах пĕлекен Лидия Алексеевна Ильинапа Ярославка ял тăрăхĕнчи Нискасси ялĕнче унăн кӳршисем патĕнче паллашрăм. «Ĕç ĕмĕрне халăх хушшинче иртнернĕрен паян та çынсемпе тĕл пулса калаçмасан темĕн çитмен пек туйăнать. Çавăнпа та килти ĕçсенчен пушансанах кӳршĕсем патне тухатăп. Ыйтакансене, пулăшу кĕтекенсене хамăн канашсемпе пулăшма тăрăшатăп. Пулăшни пулсан-пулмасан та иртнине пĕрле аса илсе ларни те паха, сывлăхшăн усăллă», – терĕ калаçу пуçарса сăмах чĕнсенех манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм. Çапла каларĕ те унăн куçĕсенче тарăн та тулли пурнăç паллисем палăрчĕç. Ветеран: «Тем те пулнă, тем те курнă», – тесе кушăрханă аллисемпе куçĕсене шăлса илчĕ. Çăмăл мар калаçу пуçланасса чунпа туйрăм.

Ыран 85 çул тултаракан Лидия Алексеевнан ачалăхĕ Муркаш тăрăхĕнчен инçетри Шуршăлта иртнĕ. Ялта чирлекенсем йышлă пулнине тата вĕсене сыватассипе ĕçсем туллин пулса пырайманнине ачаллах асăрханă Лидия хĕр пĕрчи чухнех сывлăх тухтăрĕ пулас ĕмĕтпе пурăнма пуçлать. Урамра вылянă вăййисем те, шкул çулĕсенче пушă вăхăтра вуланă кĕнекесем те сывлăх сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе пулнă: чирлĕ çынна эмел памалла, укол тумалла, суранне вăхăтра çыхмалла т. ыт. те. Çитменнине тата Лида шкул пĕтернĕ вăхăтра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă. Фашизма çапса аркатса çĕнтерĕве çывхартма пулăшмалла! Çакă та хĕре сывлăх сыхлавĕн çулне суйлама пулăшрĕ пулмалла. Çапла шухăш-ĕмĕтпе ачаран сывлăх хуралĕ пулас ĕмĕтлĕ хĕр Çĕрпӳри фельдшер шкулне вĕренме кĕрет.

Хаяр вăрçă çулĕсем. Тăшман кунпа мар, сехетпе Мускав еннелле талпăннă вăхăт. Фронтран кунсерен пирĕн салтаксем вилни çинчен пĕлтерсе килнĕ çырусем амăшĕсемпе măшăрĕсен тата ывăл-хĕрĕн куççульне юхтарнă кунсемпе çулсем. Анчах тăшман, темĕнле шелсĕр пулсан та, çĕнтерӳ пирĕнтех пулмалла. Çак ĕмĕтпе вĕренчĕç фельдшер курсĕнчи хĕрсем алла диплом илсен фронта кайма та хатĕр пулса. Фронт Лидасенчен пăрăнса иртрĕ. Çĕнтерӳ! Ун хыççăн Тăван çĕршыва ура çине тăратасси те çăмăл ĕç пулман. Ку вара тин кăна пĕлӳ илсе пурнăç çулĕ çине тухнă çамрăк хĕрсен хулпуççийĕ çине тиеннĕ.

– Фельдшер шкулне 1946 çулта вĕçлерĕм. Алла диплом илтĕм те мана направленипе çийĕнчех халиччен пулса курман Нискассине ĕçлеме ячĕç. Çĕнĕ ĕç вырăнне çитсенех Ярославкăри медпункт тивĕçтереймерĕ мана. Çамрăк вăй-халпа унăн вырăнĕнче фельдшерпа акушер пункчĕ уçассипе ĕçлеме пуçларăм. Вăл вăхăтри пуçлăхсем мана хирĕçлемерĕç. Çапла вара 1946 çултах Ярославкăра ФАП ĕçлеме пуçларĕ. Ку вара ял çыннисен сывлăхне пăхса тăрассипе те ĕç мелĕсене ӳстерчĕ. Çĕнĕ ĕç вырăнне тĕплĕн алла илсе кунта сисĕнмесĕрех 40 çул иртсе кайрĕ. Çак хушăра 40 çынна та сивĕ сăмах каламан, 40 çын та манăн пулăшуран пăрăнса утман, – аса илет паян та чунĕпе ватăлма пĕлмен сывлăх хуралĕн ветеранĕ Лидия Алексеевна Ильина.



Ярославкăпа Нискасси тăрăхне хăйĕн тăван енĕ теекен ĕç ветеранĕ ку енрех çемье çавăрнă, 3 хĕр çуратса ӳстернĕ, тивĕçлĕ пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Вĕсенчен иккĕшĕ – Галинăпа Нина – амăшĕн ĕç династийĕн тăсăмĕсем: Галя 25 çул Раççей çарĕнче медсестра пулнă, Нина вара шăл тухтăрĕ пулса ĕçлет. Вĕсен йăмăкĕ Валя – инженер-строитель.

Кашниех пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă. «Эпĕ ватă мар-ха тетĕп хама, анчах хĕрсемпе мăнуксем эпĕ ватлăха сивленине курах манăн йышăнусенчен тĕлĕнеççĕ. Мĕн тăвас, пурнăç вăл пĕр вырăнта тăмасть», – шӳтлесе те чăнласа калаçать манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм.

– Ăçта-ха сирĕн хастарлăхăн çăл куçĕ? – интереслентĕп Лидия Алексеевнаран.

– Эпĕ хам профессие питĕ юратса. Ăна кура çынсемшĕн те тăрăшса. Хам çине пăхма вăхăт пулман. Паян костюм çинчи медальсем çине пăхатăп та хăш хушăра илме ĕлкĕрнĕ вара эпĕ вĕсене тесе тĕлĕнетĕп, – сăпайлăн калаçать ĕç ветеранĕ пĕрремĕш медале 1978 çулта ĕçри хастарлăхшăн панине палăртса.

Паян вара «ЧАССР сывлăх сыхлавĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн», персоналлă пенсионерăн Лидия Алексеевна Ильинан ячĕ Муркаш районĕн Хисеп кĕнеки çинче упранать.

– Сăмахпа юсатчĕ, – теççĕ Л. Ильина пирки Ярославка таврашĕнче пурăнакансем паян та хăйсем шаннă сывлăх хуралçинчен пулăшу ыйтма пынă чух çул çинче тĕл пулсан.

– Нумай çул пурăннин вăрттăнлăхĕ мĕнре? – ыйтатăп ветеранран.

– Эрех ĕçмен, пирус туртман, çынсемпе вăрçман. Кунĕн-çĕрĕн ĕçре пулса. Ял çыннисен сывлăхĕшĕн тăрăшса. Вăхăтлă пулăшнă хыççăн ял çыннисем нумай пурăнма сунатчĕç те вĕсем калани çитет курăнать, – пулчĕ пĕрле ĕçленĕ санитарка Мария Никифоровна Хозикова паян 91 çулта, акушерка Татьяна Владимировна Гусева 87 çулта иккенне палăртса Л. Ильина ĕç ветеранĕн хуравĕ.

Виçĕ хĕр ӳстернĕ хастар хĕрарăм паян 3 мăнукпа тата вĕсен 3 ачипе савăнса пурăнать.

**А. ПЕТРОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Л.А. Ильинапа (сылтăмри) аслă хĕрĕ Галина.**

**01 пĕлтерет, асăрхаттарать**

# Вăхăтра пĕлтерме тăрăшмалла

Раççейре куллен 600-700 пушар алхаснине, ирĕке кайнă çулăмра 70-80 çын пурнăçĕ таталнине шута илсе пирĕн пушар хăрушлăхĕ пирки самантлăха та манма юрамасть. Ытти енчен лăпкă пурăнакан районăмăрта та пушар хăрушсăрлăхĕ тивĕçлĕ шайрах мар-ха. Акă авăн уйăхĕн 17-мĕшĕ тĕлне пĕлтĕр Муркаш Енре 18 пушар пулнăччĕ пулсан, кăçал 24 инкек регистрацилерĕмĕр. Вĕсенче миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех пĕлтĕр те, кăçал та пĕршер çын пурнăçĕ вăхăтсăр таталчĕ.

Кăçалхи юлашки пушар авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче Тивĕш салинче пулчĕ. Лаçран тухнă пушар пирки пирĕн пата пĕлтерӳ ирхи 3 сехет те 16 минутра çитрĕ. Инкекпе кĕрешме 3 пушар машини кăлартăмăр. Кунта çакна каласа хăвармалла. «Свобода» хуçалăхăн ведомствăлла пушар машини инкекпе кĕрешме тухайман пирки пулăшăва «Герой» хуçалăхран чĕнме тиврĕ. Кĕске хушăрах Тивĕше çитрĕмĕр пулин те, эпир каярах юлни куç умне пулчĕ. «Хĕрлĕ автан» уйрăм çыннăн кил хуçалăхĕнчи лаçпа пĕрлех юнашарах пулнă сарая тата мунчапа ампара, çуллахи кухньăна кĕл турĕ. КамАЗ пушар машини ытлă-çитлĕ шыв панипе кăна пурăнмалли çурта сыхласа хăварма май килчĕ.

Пушар хыççăнхи тĕпчев çакна кăтартса пачĕ. Ял халăхĕ пушар хуралне çийĕнчех шăнкăравласа пĕлтерейме н. Паян кĕсье телефонĕсем кашни çыннăнах пулнă май вĕсем урлă пушар хуралĕпе çыхăнма та пурин те пĕлмелле. Çак номерсене кашнийĕнех кĕсье телефонĕсен кĕнекисем çине çырса хуни пăсмĕ. Мегафон операторĕсем урлă Муркашри пушар хуралне 01 хыççăн çăлтăр пусса шăнкăравламалла. Билайн операторĕсен – 010 номерпе тӳрех шăнкăравламалла. Шăнкăравсем Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçне килеççĕ. Е кирек хăш оператор урлă та 112 номерпе пушар хуралне лекме пулать. Кун пек чух шăнкăрав Шупашкара каять.

Кĕрхи-хĕллехи вăхăт çитрĕ. Çавна май çынсем кăмакасем хутма пуçлаççĕ. Унччен вара кăмакасен тата мăрьесен юсавлăхĕ çине тимлĕрех пăхни ытлашши пулмĕ. Çакă та – паян пурнăçламалли ĕç.

**И. СМИРНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

**Килти хушма хуçалăх**

# Сивве тӳсĕмлĕ слива

***Кĕр кунĕсенчи йывăç лартмалли вăхăт çитрĕ. Çак вăхăтра пахчана та çĕнетес килет. Çавна май сивве тӳсĕмлĕ слива сорчĕсем пирки кĕскен те пулин каласа параймăр-ши?***

**А. КАПИТОНОВ.**
Мăн Сĕнтĕр сали.

Вулакан çырăвĕпе «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалистне А. СЕМЕНОВА паллаштартăмăр. Унăн хуравĕ кĕске те ансат пулчĕ. Вăл ял çыннишĕн усăллă пуласса шанатпăр.

– Сливăн тĕрлĕ сорчĕсенчен чи пахи – «Домашняя» сорт. Вăл çӳллĕ те, тĕм пек те ӳсет. 25 кг çити тухăç парать. «Венгерка» слива тухăçĕ çав вăхăтрах 12 кг шутланать. «Скороспелка красная» сорта халăх селекцийĕпе кăларнă. Вăтам çӳллĕш йывăç çимĕçне çуллен йышлă парать. Çырлисем тĕттĕм хĕрлĕ тĕслĕ, августăн иккĕмĕш çуррин тăршшĕпех пиçсе пыраççĕ. «Память Тимирязева» пирĕн тăрăхра та аван ӳсет. Вăтам çӳллĕш çитĕнет. 3-4-мĕш çулхине вăл çимĕç пама пуçлать. Сентябрь пуçламăшĕнче пиçсе çитет.